Сывă пултăр пирĕн мухтавлă тăван çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕ, унăн никама пăхăнманлăхĕ!

25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
МАЙ
1
ЭРНЕКУН
101 (6036) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Ленин-Сталин ялавĕпе—малалла!

Кăçалхи май уявне эпир аслă отечественнăй вăрçăн хĕрӳллĕ тапхăрĕнче ирттеретпĕр. Гитлерла Германи империалисчĕсем çĕршер миллион ĕççыннисене хаяр вăрçă пушарне туртса кĕртрĕç. Пĕтĕм тĕнчене, çакăнпа пĕрлех пирĕн тăван çĕршыва та, чуралантарма хăтланакан тискер гитлеризма хирĕç ирĕклĕхе юратакан халăхсем хĕç-пăшал тытса çĕкленчĕç. Фашизма хирĕç кĕрешекенсен хушшинче пирĕн совет халăхĕ малти ретре тата чи пысăк вырăна йышăнса тăрать. Унăн Хĕрлĕ Çарĕ 10 уйăх ытла ĕнтĕ фашистла Германин урнă дивизийĕсене хирĕç çапăçать. Çак вунă уйăхри хаяр çапăçусенче вăл Германин сахал мар полкĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ, унăн тискер вăйĕсене çĕр çинче те, тинĕс çинче те, сывлăшра та вирлĕн çапа-çапа пĕтерсе пычĕ. Гитлерла Германин паянхи çарĕ—1941 çулти çар мар ĕнтĕ. Германи çарĕн салтакĕсен наступлени тăвас хавасланăхĕ пĕтнĕ. Анчах çак тискер çар хăйĕн техники çинче, вăрçă машини çинче тытăнса тăма тăрăшать-ха. Вăл вăйлă-ха. Вăл çуркуннехипе çуллахи уйăхĕсенче наступлени пуçласа яма шутлать.

1942-мĕш çул—гитлерла Германи çарне тĕппипе çапса аркатмалли çул пулмалла. Ăна пуçĕпех çĕмĕрсе тăкма вăй нумай кирлĕ. Çак пысăк задачăна пурнăçа кĕртес тесен, пирĕн хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара çĕнĕрен-çĕнĕ хĕç-пăшал, çителĕклĕ таран апат-çимĕç парса тăмалла. Пурте фронтшăн вăя шеллемесĕр ĕçлесен, эпир çакна тума пултаратпăр.

Пирĕн совет халăхĕ гитлерла фашизм вăйне хавшатас тĕлĕшпе 10 уйăх вăрçса сахал мар çитĕнӳсем турĕ. Вăл хăйĕн тăван Хĕрлĕ Çарĕн хăватне уйăхран-уйăха ӳстерсе пырса, ăна гитлерла Германин вăрă-хурахла çарĕнчен нумай вăйлăрах та çирĕпрех çар туса хучĕ. Пирĕн тылпа фронт пĕр шухăшпа, пĕр ĕмĕтпе таччăн çыхăнса тăраççĕ. Çавăнпа та пире нимĕнле тискер тăшман та парăнтарса ӳкерме пултараймасть. Пирĕн çирĕп тыл фронта кирлĕ япаласене пурне те парса, ăна пĕр таттисĕр пулăшса тăрать.

Фронта пулăшас тĕлĕшпе чăваш халăхĕ те пĕтĕм вăя, мĕншур тимлĕхне хурса ĕçлет. Пирĕн рабочисен, колхозникĕсен, интеллигенцин патриотизмĕ вĕсен пур ĕçĕсенче те палăрса тăрать. Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне сарнине çеç илĕпĕр. 10 миллиард тенкĕлĕх кăларнă заема пĕтĕм совет халăхĕ вунă кун хушшинчех 12 миллиард та 860 миллион тенкĕлĕх ытла вырнаçтарчĕ пулсан, çак хушăрах вăл заема пирĕн Чăваш республикинчи ĕççыннисем 64 миллион та 10 пин тенкĕлĕх çырăнчĕç. Ку вăл республика бюджечĕпе палăртнинчен 133 процент чухлĕ пулать. Отечественнăй вăрçăн йывăр условийĕсенче пуша илсе тата тискер тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас кăмăлпа—кашни рабочи, кашни колхозник, кашни служащи хăйĕн перекетленĕ укçине тăван çĕршыв оборонине пама тăрăшрĕ. Заема хăвăрт çырăннипе пĕрлех пирĕн ĕççыннисем унишĕн памалли укçана та хăвăрт тӳлесе татма тăрăшаççĕ. Паянхи кун тĕлне республикăн чылай районĕсенчи (Сĕнтĕр, Хĕрлĕ Чутай, Вăрмар, Шăхасан, Советски тата ыт. те) колхозникĕсемпе единоличникĕсем заем укçине парса татрĕç. Çапла, пирĕн ĕççыннисем тăшмана хăвăртрах çĕнтерсе тăкма мĕн кирлине пурне те тума хатĕр. Пирĕн рабочисем, колхозникĕсем, служащисем ырми-канми ĕçлесе, шур майпа та фронта пулăшса тăма пĕтĕм вăйĕсене хураççĕ. Май уявĕ умĕн пуçласа янă социализмлă ăмăрту производствăллă предприятисенчи рабочисене çĕнĕрен пысăк çитĕнӳсем тума пулăшрĕ. Нумай предприятисем, уйрăм цехсем, рабочисен бригадисем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене срокчен тата ытлашшипех тултарчĕç. Канашри вагонсем юсакан заводри Чернухинпа Николаев ертсе пыракан фронтовой бригадăсем—вагонсем юсас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене срокчен пĕр эрне малтан тултарнă; Çĕмĕрле комбиначĕ, ăмăртăва хутшăнса, апрельри производство программине срокчен виçĕ кун малтан тултарнă. Çак çитĕнӳсене тăвас тесе предприятисенчи, цехсенчи тата бригадăсенчи кашни рабочи пĕтĕм тимлĕхне хурса, вăйне шеллемесĕр ĕçленĕ.

Фронта пулăшса тăрас тĕлĕшпе пирĕн колхозсем тата уйрăм колхозникĕсем те юлмаççĕ. Çĕршыв оборонине тата фронта пулăшса тăрас енĕпе вĕсем çĕнĕрен-çĕнĕ формăсем шыраса тупаççĕ. Кăçалхи çуракинчен пуçласа пирĕн колхозсенче оборона гектарĕсем акас ĕç сарăлать. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Чкаловски районĕнчи колхозсем хастарлăн тăрăшаççĕ.

Пирĕн колхозсем тата уйрăм колхозникĕсем иртнĕ кĕркуннерен пуçласа государство тата фронт валли пиншер центнер тырă, аш-какай, сĕт-çу тата ытти продуктсем пачĕç. Тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкса çĕнтерӳ тăвассишĕн пирĕн колхозникĕсем малалла та фронтшăн пурне те пама хатĕр тăраççĕ.

Чăваш халăхĕ фронта пулăшас тĕлĕшпе, Совет Союзĕнчи ытти тăванла халăхсем пекех, хĕрӳллĕн ĕçлет. Рабочисем—станок умĕнче, колхозникĕсем уй-хир ĕçĕнче хавхаланса ĕçлеççĕ.

Анчах та пирĕн халиччен тунă çитĕнӳсемпе лăпланма юрамасть. Хаяр та тискер тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкмашкăн пирĕн хамăр вăйсене татах та ӳстермелле; предприятисенче, колхозсенче çĕнĕрен-çĕнĕ, пысăкрах та пысăкрах çитĕнӳсем тумалла. Кăçалхи çуракине срокра вĕçлени—фронтра çĕнтерӳ тума пысăк пулăшу памалла. Çакăн çинчен кашни колхозникĕн асра тытса, хăйĕн ĕçне чыслăн туса тăма тăрăшмалла.

Пурте фронтшăн, пурте фронтри пек ĕçлесен,—эпир çĕнтеретпĕр тата вăл çĕнтерӳ инçе мар. Майăн 1-мĕшĕнче тата ытларах хамăрăн вăйсене пухса, пурте фронтри пек ĕçлеме тăрăшар.

Аслă полководец Сталин ертсе пынипе пирĕн Хĕрлĕ Çар тăшмана аркатать.

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă тăван çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕ, унăн никама пăхăнманлăхĕ!

Ленин—Сталин ялавĕпе—малалла, нимĕç захватчикĕсене аркатма!

Май уявĕ тĕлне тунă çитĕнӳсем

Фронтовой бригада стахановла ĕçлет

Сталин ячĕпе тăракан автозаводри комсомолецсемпе çамрăксем Хĕрлĕ Çар XXIV çул тултарнине чаплă çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме кăмăл туса ответлесе, пирĕн цехри комсомолецсем фронтовой бригада организацилерĕç. Унтанпа виçĕ уйăх иртрĕ ĕнтĕ. Çак вăхăт хушшинче бригада чылай паха çитĕнӳсем турĕ. Малтанхи вăхăтра уйрăм рабочисем хăйсен нормисене те тултараймасть пулсан, юлашки вăхăтра бригада кашни кунах плана 150 процентран кая мар тултарса ĕçлет.

Бригадăра 17 çын. Кашниех вĕсем ĕçре çĕнĕ çитĕнӳ тăвассишĕн, продукцие отлично пахалăхпа туса кăларассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ.

Февраль уйăхĕнчи плана эпир 21 кун хушшинче тултартăмăр. Çак уйăхра тунă çитĕнĕве çирĕплетсе, март уйăхĕнче эпир тата çĕнĕ çĕнтерӳ турăмăр — уйăхлăх плана бригада 152 процент тултарчĕ.

Май уявĕ ячĕпе пуçланнă ăмăрту уйрăмах хăвăртлăхсене ӳстерме пулăшрĕ. Кашни рабочи уява çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕ. Двухсотник Прокопьев юлташ юлашки вăхăтра нормăна 350—370 процент тултарса ĕçлет, комсомолец Иван Киселев икшер нормăран кая мар тăвать. Çакăн пек ĕçлеççĕ Волков, Анисимов, Маюшин тата ытти юлташсем те. Бригада апрель уйăхĕнчи заданине ытлашшипех тултарса, планран ирттерсе тата темиçе пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ. Урăхла каласан, цехра вăл пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Анчах тунă çитĕнӳсене эпир виçе теме пултараймастпăр, пачах урăхла, вĕсем пире малашне ĕçре тата ытларах ӳсĕм тума май пуррине кăтартса параççĕ. Çавăнпа эпир татах та ытларах вăя хурса ĕçлесе, çĕршыва тата фронта ытларах продукци туса пама тăрăшатпăр.

П. АНИСИМОВ,
Çĕмĕрле комбинатĕнчи фронтовой бригадăн бригадирĕ.

Стахановецсен паллă ĕçĕсем

КАНАШ, апрелĕн 30-мĕш. (Телефонпа). Ĕççыннисен уявне тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленнĕ май, вагонсем юсакан заводри стахановецсем çавтери чаплă ĕçсем тăваççĕ. Апрелĕн 28-мĕшĕнче инструментальнăй цехри термистсем Моряковпа Смирнов юлташсем сменăри задание 1.107 процент тултарчĕç. Çав кунхине коммунист — фрезеровщик Осипов юлташ та нормăпа пăхнинчен 6 хут тухăçлăрах ĕçлерĕ.

Г. СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарĕ.

Производствăллă пысăк парне

КУСЛАВККА, апрелĕн 30-мĕш. (Телефонпа). Социализмлă ăмăртуна стахановла движение кашни кунах вăйлатса пынипе пирĕн комбинат апрель уйăхĕнчи ĕç планне срокчен виçĕ кун малтан тултарчĕ.

Халĕ коллектив уйăхри плана ирттерсе тултарассишĕн кĕрешет. Апрелĕн 28-мĕшпе 29-мĕшĕнче плана 8 процент таран ирттерсе тултарчĕ. Çапла вара эпир май уявĕ ячĕпе çĕршыва производствăллă пысăк парне кӳтĕмĕр.

Май умĕнхи ăмăртура пирĕн комбинатра двухсотниксен йышĕ чылай ӳсрĕ. Уйрăмăнах Калашников юлташ ертсе пыракан цехра двухсотниксем йышлă. Акă, Коняшина, Наумова, Тухтанова, Морозов, Барабанов, Писарихин рабочисем нормăна 200-шер процент тултарма пуçларĕç.

Çавăн пекех Петрученко начальник пулса тăракан цехри Алферов, Ермаков, Манусин токарьсем нормăна икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Комбинатра Май уявĕ ячĕпе пыракан ăмăрту иккĕмĕш кварталта малалла та тăсăлать.

А. КОПТЕВ,
Завком председателĕ.

Апрельри плана 124 процент тултарчĕ

СĔНТĔР, апрелĕн 30-мĕш. (Телефонпа). Янăмри «Дружба» артель коллективĕ Май уявне çĕнĕ çитĕнӳ тунипе — апрель уйăхĕнчи ĕç планне 124 процент тултарнипе кĕтсе илчĕ.

Коллектив çак çитĕнĕве уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса ĕçленипе, стахановла ĕç методĕсене сарса пынипе турĕ.

Май умĕнхи ăмăрту кунĕсенче артельре çĕнĕ стахановецсем хутшăнчĕç. Акă, Н. Белов, И. Петухов, Васильев юлташсем кулленхи нормăсене 200-шер процент тултарса пычĕç.

С. НАЛИМОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 29-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 29-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

Апрелĕн 28-мĕшĕнче нимĕçсен 75 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 14 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 28-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 8 бронемашинипе танкеткине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 109 автомашинине, 9 полевой тата зенитнăй орудине, зенитнăй пулеметсен 7 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, çавăн пекех тата артиллерипе миномотсен темиçе батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче гитлеровецсем пирĕн оборона рубежне атакăлама хăтланса пăхнă. Пирĕн боецсем вĕсене хирĕç вăйлăн пеме тытăннă. Нимĕçсем каялла чакнă. Çапăçу хирĕнче вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна яхăн вĕлернĕ.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн стрелковăй дивизи виçĕ уйăх хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 10.000 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинчех дивизи противникăн 70 оруди, 100 пулемет, 20 миномет, 3 танк, 50 автомашина, 7 трактор, 10 мотоцикл, 50 велосипед, 6 радиостанци, боеприпассен тата çар пурлăхĕсен 8 складне тытса илнĕ.

* * *

Красноармеец-снайперсем гитлеровецсен чĕрĕ вăйне пысăк çухатусем кӳреççĕ. Пирĕн пĕр чаçри (Хĕвеланăç фрончĕ) снайперсен групни нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 362 çынна пĕтернĕ. Çав чаçри кĕçĕн политрук Косунбеков 55 нимĕçе, Буров красноармеец—50, Ногин — 48, Ромазанов 35 нимĕçе пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн тепĕр чаçри (Крым фрончĕ) снайперсем апрелĕн 27-мĕшĕнче 50 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Пирĕн чаçăн (Калинин фрончĕ) разведка отрячĕ, противник тылне кĕрсе кайса, М. пункт çине сасартăк пырса тапăннă та нимĕçсен унти гарнизонне, 110 салтакпа офицера, пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Саперсем — Лейт сержант тата Изгорешевпа Ектов красноармеецсем нимĕçсем Р. юханшывĕ урлă кĕпер хывса пĕтерни çинчен пĕлнĕ. Пирĕн саперсем йывăççенчен сулă тунă та ун çине взрыв тумалли япаласемпе минăсем тиенĕ. Каç пулса çитсен, боецсем вăрахăн çунакан шнура вут тивертнĕ те сулла шыв юхăмĕпе янă. Вăл аялалла хăвăрт юхса кайса кĕпер патĕнче чарăннă. Часах вăйлă взрыв сасси кĕрлесе кайнă. Кĕпер сывлăшалла сирпĕннĕ.

* * *

Партизансен «Лазо» ятлă отрячĕ Смоленск облаçĕнчи халăх пурăнакан икĕ пункт хушшинчи мăн çулпа куçса пыракан нимĕç пехотин колоннине атакăласа пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансем 4 станковăй тата 3 ручной пулемет, 5 миномет, 10 велосипед, гранатăсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 294-мĕш пехотнăй дивизийĕн 513-мĕш полкĕнчи 2-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Вальтер Вельд çапла каласа панă: «Пирĕн взвод С. пунктран 4 километрта выртакан высотана ирччен тытса тăма приказ илчĕ. Çĕрле пире вырăссем çавăрса илчĕç. Кĕске çапăçу хыççăн взводран мĕн пурĕ те 5 çын кăна юлчĕ. Вара эпир тыткăна парăнтăмăр. Салтаксем Германи çарĕ çуркунне çĕнтерессине ĕненмеççĕ. Пурин те салхуллă шухăш-кăмăлсем. Пурте тарăхса тата çилленсе çӳреççĕ. Нумаях пулмасть, пирĕн ротăри 2-мĕш взвод командирĕ Краузе фельдфебель тарчĕ. Пире ун çинчен ăна тăшман тыттăрса персе вĕлернĕ тесе пĕлтерчĕç».

* * *

Вĕлернĕ обер-ефрейтор Ганс Шмидт çумĕнче вăл хăйĕн арăмĕ патне çырса хунă, анчах та яма ĕлкĕреймен çыру тупнă. Вăл çапла çырнă: «...Пирĕн пурнăç çинчен каласманни лайăхрах, вăл çавтери начар, пĕр савăнăç та çук. Пирĕн пурин те пĕр шухăш кăна: хăçан та пулин пĕтĕ-ши му ылханлă вăрçă?! Е пирĕн пурин те кунтах пĕтмелле пулать-ши? Вырăссем тĕреклĕнвĕçĕмĕн тĕреклĕнсе пыраççĕ... Эпир пачах этем ретĕнчен тухрăмăр, тумтирсене, атăсене хывмастпăр. Пире пĕтĕмпех пыйтăсем аптăратаççĕ, вĕсенчен хăтăлма нимĕнле май та çук».

* * *

Пирĕн войскăсем нимĕçсене хăваласа кăларнă хыççăн Смоленск облаçĕнчи Лутовка ялĕнче красноармеецсем çурса касса пĕтернĕ 37 виллине тупнă. Куракансем — çав ялти çынсем — çапла каласа кăтартнă: пирĕн боецсене гитлеровецсем калама çук тискеррĕн асаплантарса пĕтернĕ, вĕсенчен тӳсме çук ирсĕррĕн мăшкăлланă. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тыткăна лекнĕ красноармеецсенчен улттăшне йывăç çине çакнă та вĕсен айне вут хунă. Ситчĕ красноармеецăн куçĕсене чиксе шăтарнă, ыттисенне хăлхисене касса илнĕ, чĕрнисене туртса кăларнă, аллисемпе урисене пăра-пăра пăрахнă.

* * *

Апрелĕн 11-мĕшĕнче çĕрле гитлеровецсен отрячĕ Варшава воеводствинчи нумай ялсенчен (Польшăра) унти мĕн пур халăха йăлтах çывăхри чугунçул станцине хăваласа кайнă. Хресченсене тавар турттармалли вагонсем çине вăйпах лартнă та Германие ирĕксĕр ĕçлеттерме янă.

Çурхи ака пуçланчĕ

ИШЛЕЙ, апрелĕн 28-мĕш. (Телефонпа). Паян ирхине 6 сехетре МТС трактор бригадисем ĕç вырăнĕсене тухса кайрĕç. Тракторсем машинно-тракторнăй станцинчен тухас умĕн кĕске митинг пулса иртрĕ. Митингра МТС политотделĕн начальникĕ Васильев юлташ трактористсене хĕрӳллĕн ĕçлеме чĕнсе сăмах каларĕ. Трактористсенчен пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ Елахов тухса сăмах каларĕ. Вăл кăçалхи çуракинче фронтри пек ĕçлеме пулса хăйĕн сăмахĕсемпе пĕтĕм трактористсемпе трактористкăсен шухăш-кăмăлне, хĕрӳллĕн ĕçлес шухăшне палăртрĕ.

Трактор бригадисем çуракине хĕрӳллĕн хатĕрленчĕç. Тракторсене ремонтлас ĕçре кăтартуллăн ĕçленĕ 9-мĕш бригада МТС-ăн куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Хĕрлĕ ялава алла илсе, бригадир Ефимов юлташ: «Манăн бригада кăçал ялхуçалăх ĕçĕнче хастарлăн ĕçлесе çак ялава яланах тытса тăма тивĕçлĕ пулĕ», терĕ.

Кунсăр пуçне трактор бригадисенче куçса çӳрекен пĕчĕк ялавсем тунă. Çав пĕчĕк ялав бригадăра чи лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекен трактористăн тракторĕ çумĕнче пулмалла. Социализмлă ăмăртăва тухса трактористсем паха обязательствăсем илчĕç. Кашни тракторист çуракинче 250—500-шер гектар сухалама тăрăшать.

З. МИТРОФАНОВА.

* * *

СОВЕТСКОЕ, апрелĕн 29-мĕш. (Телефонпа). Районри колхозсем çурхи ĕçсене тума хĕрӳллĕн тытăнчĕç. Клевер акаççĕ, кĕрхи тырăсен калчисене апат параççĕ.

Паянхи куна районра пурĕ 209 гектар клевер акнă, 113 гектар кĕр тыррисен калчисене апат панă. Хурамалăхри, Анат Ачакри, Тури Ачакри колхозсем, Кивуй, Ишелкасси, Семеткасси колхозĕсем клевер акас плана пурнăçланă. Нумай колхозсем вăрлăхлăх çĕрулмие яровизацилеме хучĕç.

Як. СИГАЙ.

Май уявĕ ячĕпе Шупашкарта пулнă чаплă лару

Майăн 30-мĕшĕнче каçхине Шупашкарта парти, совет тата обществăллă организацисен, Шупашкар гарнизонĕн Май уявĕ ячĕпе чаплă лару пулса иртрĕ.

Президиумра ВКП(б) Чăваш Обком бюровĕн членĕсем, Шупашкар хула комитечĕн секретарĕсем, хулари гарнизонăн представителĕсем, предприятисенчи стахановецсем.

Чаплă лару тăвăллăн алă çупса хисеплĕ президиума аслă Сталина, Молотов, Ворошилов, Каганович, Калинин, Андреев, Микоян, Жданов, Хрущев, Берия, Шверник, Маленков, Щербаков тата Вознесенский юлташсене суйларĕ.

«Майăн 1-мĕшĕ — рабочи класăн кĕрешӳри вăйĕсене пăхса тухмалли кун» темăпа ВКП(б) Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ Ахазов юлташ доклад туса пачĕ.

Тăвăллăн алă çупса чаплă ларура çулпуç, аслă полководец Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Унтан концерт пулчĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 30-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Апрелĕн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле пăлтă ĕçсемех те пулман.

* * *

Противникăн танксем пулăшса пыракан пехотин батальонĕ Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçакан пирĕн стрелковăй часĕн позицийĕсене атакăлама виçĕ хутчен тапăнса пăхнă. Артиллеристен тата пехота хĕçпăшалĕнчен пенипе тăшманăн атакисене пурне те сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 300 вилли ытла тата тăшманăн пĕр çĕмĕрĕлнĕ танкĕ выртса юлнă. Пирĕн боецсем пăшалран персе противникăн пĕр самолетне ÿкернĕ.

* * *

Калинин фронтĕнчи участоксенчен пĕринче çапăçакан пирĕн часть противникăн оборонăра пăмалли пунктне йышăннă тата нимĕçсен 6 пулеметне, 2 миномете, автоматсемпе винтовкисене нумай тытса илнĕ. Гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 150 çын ытла вилнĕ.

* * *

Снайпер Фрундин юлташ апрелĕн 27-мĕшĕнче гитлеровецсене 7 çынна вĕлернĕ тата 2 çынна амантнă. Вăрçă пуçланнăранпа вăл противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене пĕтĕмпе 101 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сержант Компанеец пулеметран тĕл персе нимĕçсен хăйсен артиллерине снарядсем ăçта ÿкнине кăтартса пыракан самолетне ÿкернĕ.

* * *

Ленинград партизанĕсен групи нимĕçсен çар снаряженийĕсене тиенĕ поездне ÿпĕнтерсе янă. Тепĕр кунне партизансем противникăн çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. 28 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем нумай вилнĕ.

* * *

Венгрин 118-мĕш бригадинчи 48-мĕш пехотнăй полкăн 9-мĕш ротинчен тытăна лекнĕ Антал Молнар салтак çапла каласа панă: «Пирĕн ротăри салтак Лайош Марка нумай пулмасть тăван çĕршыва кайса килнĕ. Вăл çапла калать: нимĕçсем Венгрие çаратаççĕ, ял хуçалăх продукчĕсене, йывăççене, чăртавара турттарса каяççĕ. Гитлер Венгри çамрăкĕсене пĕтерсе тăкма тăрăшнине, Венгрие вăй-халсăр тăратса хăварма тăрăшнине, кайран вара вăл хăйне тĕллĕн государство пулса тăрассине пĕтерсе лартма шутланине халăх ăнланса илме пуçларĕ. Пур çĕрте те: нимĕçсем пире çисе ярасшăн, тесе калаçаççĕ. Вăрçăччен эпир ĕçлесе пурăнаттăмăр, хамăр çемьесемшĕн тăрăшаттăмăр, халĕ вара Гитлерпа унăн Венгрири лакейĕсем пирĕнтен бандитсем тупрĕç, пире çаратма тата вĕлерме вĕрентеççĕ».

* * *

Противникран тытса илнĕ полевой почтăра нимĕç майорĕ Леопольд Парак патне тăванĕсем янă çырăва тупнă. Будвейсран (Чехословакия) янă çырура çакăн çинчен пĕлтереççĕ: «Кунта осаднăй положени туни çинчен пĕлтернĕ. Чехсене нумайĕшне персе вĕлерчĕç. Çак кунсенче паллă мар çынсем фабрикăна вут тивертсе çунтарса ячĕç».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем хăйсем оккупациленĕ совет районĕсенчи халăха пĕтереççĕ. Март уйăхĕнче гитлеровецсем Орел облаçĕнчи Журеничи тата Бежичи ялĕсенчи çынсене пурне те персе вĕлернĕ. Жуковка ялĕнче нимĕçсем совет гражданĕсене 80 çынна асаплантарса вĕлернĕ. Сумск облаçĕнчи Глуховск районĕнче чылай ялсенчи çуртсене пĕтĕмпех вут тивертсе çунтарса янă. Нимĕçсем йышăннă районсенчен тарса килнĕ совет гражданĕсем çапла каласа параççĕ: нимĕç ирсĕрĕсем хĕрарăмсене ирĕксĕрлесе пухаççĕ те вĕсен куçĕ умĕнчех пĕчĕк ачасене темĕн тĕрлĕ асаплантарса хĕн кăтараççĕ.

* * *

Италири тĕрлĕ хуласенче Итали салтакĕсемпе нимĕç салтакĕсем пĕр-пĕринпе çапăçасси час-часах пулса иртет. Апрелĕн 21-мĕшĕнче Генуя хулинче урамра хĕрарăмсем патне çулăхнă нимĕç летчикĕсене Итали салтакĕсем хĕненĕ. Тепĕр кунне портра Итали матросĕсемпе нимĕç салтакĕсем хушшинче çапăçу пулса иртнĕ. Пĕр-пĕрне çĕçĕсемпе чикесси патнех çитнĕ. 5 нимĕçе вĕлернĕ, 11 нимĕçе йывăр амантнă.

Оборона фондне пама 120 гектар акаççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ. Районри колхозниксемпе колхозницăсем Краснодар крайĕнчи Выселковски районри Н. К. Крупская ячĕпе тăракан колхозниксем чĕнсе каланине пысăк çĕкленÿпе сÿтсе-явса ырларĕç. Тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетме тата нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă тата ирĕке тухса пыракан районсемпе облаçсенчи колхозсене тăванла пулăшу пама нумай колхозсем кăçалхи çураки планĕнчен ирттерсе оборона гектарĕсем акса хăварма йышăнчĕç. Коммунист Мажаров председатель пулса ертсе пыракан «Канаш» колхоз оборона фондне пама планран ирттерсе 10 гектар тырă акса хăварма йышăнчĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз 15 гектар акса хăварать.

Районри колхозсем оборона фондне пама кĕртырнсене планран ирттерсе 102 гектар акса хăварнă. Вăл шутран «Çăлтăр» колхоз 8 гектар, «Маяк», Ленин ячĕпе тăракан, «РОКК», «Майăн 1-мĕш» колхозсем 6-шар гектар акнă. Кăçалхи çуракин планне тултарнă хыççăн, районри колхозсем тăван çĕршывăн оборони фондне пама 120 гектартан кая мар тырă акма палăртрĕç.

П. СЕРГЕЕВ.

Смоленск облаçĕнчи ĕççыннисем — хăйсене ирĕке кăларакансене

Смоленск облаçĕн Сухиничи районĕнчи Татарински, Глазовски, Воловински тата ытти ялсовечĕсене те кĕрекен ялсенчи колхозниксемпе интеллигенци Смоленск облаçне ирĕке кăларасшăн кĕрешекен боецсемпе командирсем тата политработниксем патне праçник ячĕпе кучченеçсем нумай янă. Хăйсен çырăвĕсенче колхозниксемпе колхозницăсем фашистла вăрă-хурахсем çĕмĕрсе хăварнă ялсене вĕсем мĕнле юсаса йĕркелесе пыни çинчен каласа кăтараççĕ. (ТАСС).

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран): 1. Бенский юлташ директор пулса тăракан заводри слесарь-стахановка **Данилова** юлташ; 2. Çав заводри нормировщица **Черепанова** юлташ, — вĕсем нормăна 300—360 процент тултарса ĕçлеççĕ; 3. Шупашкарти трех заводĕнчи **Петухова** юлташ.

Мохов фотоÿкерчĕкĕ.

Пирĕн колхоз çыннисем

1. Яровизатор Кузьма Николаев.

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче пирĕн колхоз чылаях пахча çитĕнÿсем турĕ. Эпир кашни гектартан 16—17 центнертан кая мар тĕштырă туса илтĕмĕр. Çак ĕçре яровизатор Кузьма Николаев юлташ хастарлăн ĕçлени пысăк вырăн йышăнса тăчĕ. Вăл вата пулсан та ĕçе лайăх туса пырать. Вăл хăйĕн ĕçне тимлесе тунипе пула, колхоз иртнĕ çул çурхи тырăсене пурне те яровизацилесе акрĕ. Анчах яровизаторăн ĕçĕ вăрлăхсене акма хатĕрленнипех вĕçленмерĕ. Вăл яровизациленĕ культурĕсене мĕнле вырăна акмаллине тата акнă хыççăн епле шăтса ÿснине сăнаса пычĕ, кирлĕ чухне апатлантарса тăчĕ. Ку ĕçре ăна унăн вĕрентекенĕсем—звеноводсемпе бригадирсем аван пулăшса пычĕç.

Кăçалхи çураки колхоз умне иртнĕ çулхинчен те пысăкрах тата ответлăрах задачăсем кăларса тăратать. Халĕ Çар тата мĕнпур совет халăхĕ гитлерла варварсене хирĕç отечественнăй аслă вăрçă туса пынă вăхăтра тырпул тухăçлăхне нихăçанхинчен те вăйлăрах ÿстересси тĕп ыйтусенчен пĕри пулать.

— Планран ирттерсе тунă кашни пĕрчĕ—фашистсене тĕп тăвакан пĕр пуля. Кашни пĕрчĕ тăшмана аркатса тăкмалли вăй пулса тăрать,—тет Кузьма Николаев.

Старик хăйĕн ывăлне фронта ăсатнă. Хăй вăл тырпул фронтĕнче ывăлĕ пекех пысăк пултарулăхпа кĕрешет. Кăçал пирĕн пурĕ 358,70 гектар çине тырă акса хăвармалла, вăл шутран 150 гектар çине яровизациленĕ вăрлăхсене акмалла. Яровизацилесе акнин усси пысăк пулнине иртнĕ çул эпир хамăр куртăмăр, — тет Кузьма Николаев.

Уйхир ĕçĕн бригадирĕ А. Тарасов юлташ нумаях пулмасть Хĕрлĕ Çарретне кайрĕ. Вăл кайнă хыççăн бригадир пулса ĕçлеме колхозниксем Кузьма мучие суйларĕç.

Унăн бригади çуркунехи уйхир ĕçĕн планне çирĕппĕн пурнăçласа пырать. Бригада ĕç тухăçлăхне 200 процент таран ÿстерсе ĕçлет.

2. Михаил Порфирьевич савăнать

Унăн аллин пÿрнисене империализм вăрçинче тăшман пульли татса кайнă. Вăл тăван ялне вăрçă хирĕсенчен таврăннă та плотник ĕçне пикеннĕ. Сасартăк яла патшана сирпĕтсе антарни çинчен, юнлă империализм вăрçинчен граждан вăрçи туса яни çинчен хыпар çитнĕ.

— Миша, эсĕ аманнă-çке... ан кай...— тенĕ ăна арăмĕ. Вăл итлемен.

— Эпĕ халăх ирĕкĕшĕн, хамăрăн кĕлмĕçлĕхе пĕтерессишĕн çапăçма каятăп,—тенĕ вăл арăмне.

Вăл партизана кайнă. Ун хыççăн Хĕрлĕ кавалеристсен дивизийĕнче интервентсене хирĕç паттăррăн çапăçнă.

Колхоз пулма пуçласан, Михаил Порфирьев колхоза кĕчĕ, хĕрÿллĕн ĕçлесе çĕнĕ пурнăç тума тытăнчĕ. Кăçал Порфирьев юлташăн ĕçри хастарлăхĕ пушшех те ÿсрĕ. Вăл çĕрĕн-кунĕн ĕçлет. Кăнтăрла хирте, е хутлăмăрсен утарĕнче, каçхине колхоз панă заданипе фронт заказĕсене пурнăçлать.

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче М. Порфирьевăн çемьи виççĕн ĕçлесе 1024 ĕçкунĕ тунă.

— Эпĕ савăнатăп, мĕншĕн тесен ку вăхăтра ĕçлеме те, ĕçленĕшĕн тивĕçлине илме те майсем пур. Колхозра мĕн чухлĕ тăрăшса ĕçлетĕн, сана çавăн чухлĕ ырлаççĕ, хаклаççĕ. Эпĕ, акă, 172 пăта яхăн тĕштырă илтĕм.

Совет халăхĕсен паттăрлăхĕ, пĕрлĕхĕ çирĕпленсе пырать. Ялхуçалăх фронтĕнче хĕрÿллĕн ĕçлесе тăван çĕршыва, хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшар,—тет М. Порфирьев колхозник.

3. Председательтен. нумай килет

Хальхи вăхăтра тĕп ĕç—çуракине чи кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттересси пулса тăрать. Кăна ăнăçлăн ирттерес ĕçре массăна организацилеме пĕлни кирлĕ. Пирĕн колхозăн çĕнĕ председателĕ—иртнĕ çулсенче гектартан 150-шар пăт тĕштырă туса илекен мастерсенчен пĕри—Данил Ефимов ĕçе шăпах çакăнтан тытăнчĕ те. Колхозăн активне, бригадирсемпе звеньевойсене, ялти комсомолецсемпе çамрăксене пĕр ĕçе пĕрлештерсе, вăйлă тырпул туса илес кĕрешĕве çĕклерĕ.

— Комсомолецсем, бригадирсемпе звеньевойсем хăйсем çеç кăтартуллăн ĕçлени сахал. Вĕсен хăйсем хыççăн колхозниксен мĕнпур массине, колхозри тĕп вăя—хĕрарăмсене ĕçре пултаруллăн ертсе пыма пĕлмелле,—тет председатель Ефимов юлташ.

Председатель пултаруллăн ĕçленине пула, колхоз кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче сахал мар паха ĕçсем турĕ. Бригадăсенче ĕç дисциплини çирĕпленчĕ, колхоз çуракине лайăх хатĕрленчĕ. Бригадăсем тĕплĕ шухăшласа тунă план тăрăх лайăх ĕçлесе пыраççĕ.

4. Выльăх-чĕрлĕх ферми заведующийĕ

Ун çинчен сахал калаçатчĕç: «Мĕн-ха пур ун ĕçĕнче? Фермăра пурăнма такам та пултарать». Анчах вăйпитти хĕр Анна Арсентьева ĕçре пысăк çитĕнÿсем турĕ. Вăл ĕçе кĕриччен колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисенче йĕркелĕх пулман. Уйччен заведующи пулса ĕçленĕ М. Павлов выльăх-чĕрлĕхсенчен нумай тупăш илессишĕн тăрăшса ĕçлемен. Выльăхсем начарланса пынă.

— Ĕнерен нумайрах сĕт илес тесен, ăна апата нормăпа çитермелле. Выльăха ытлашши апат пăрахса пани, е пĕр тĕслĕ апатпа усрани вырăнлă мар. Çав вăхăтрах вĕсене тасатса тăни те кирлĕ,—тет Арсентьева юлташ. Вăл ертсе пынипе фермăра ĕçлекенсем кашни ĕнерен кăçал 1500-шер литр сĕт илессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Сысна ферминче ĕçлекен А. Журавлева, А. Иванова колхозницăсем иртнĕ çулта кашни сысна аминчен вăтам хисеппе 17-шер çăвăр илчĕç, çăвăрсене лайăх пăхса çитĕнтерчĕç. Фермăсем 1941 çулта колхоза 28.430 тенкĕлĕх тупăш пачĕç.

— Эпир, — тет Арсентьева, — Хĕрлĕ Çар валли нумайрах та нумайрах ашкакай хатĕрлĕпĕр.

5. Ыттисем те юлмаççĕ

Колхозри стахановецсем çинчен каласа пĕтерме çук. Вĕсем кулленех ÿссе пыраççĕ. Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа пирĕн Кĕçĕн Кипекри «Память Ленина» колхозра стахановецсен хисепĕ 140-рен те иртрĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ вăрçă хирĕсене тухса кайрĕç. Анчах кайнисен вырăнне çĕнĕ çынсем ĕçе тăчĕç, икшер çыншăн ĕçлеме пуçларĕç.

Колхоз хăйĕн тракторисчĕпе тивĕçлипе мухтанать. И. Лукин кашни акарах хăйне панă плана 200—300-шер процент тултарса ĕçлесе пынă. Кăçалхи çуракинче вăл четырехсотниксемпе пятисотниксен ретне тăма сăмах пачĕ. И. Лукин кăçал колхоз çамрăкĕсене 50 çынна тракторпа ĕçлеме вĕрентрĕ.

Пахча-çимĕç ăстаçисем Ф. Кустин, Ф. Куликова, М. Кустина, махорковод Т. Васильев, бригадирсем В. Макаров, Д. Игнатьев, конюхсем М. тата С. Петровсем иртнĕ çулта 400—450-шар ĕçкунĕ тунă. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вĕсен ĕçри хастарлăхĕ татах та ÿсрĕ.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Америкăри славянсен съезчĕ

ДЕТРОЙТ, апрелĕн 29-мĕш. (ТАСС). Америкăри славянсен съезчĕ — Европăри славян çĕршывĕсенчен куçса кайнă мĕнпур американецсен пĕрлĕхне кăтартакан демонстраци пулса тăчĕ. Вăл çав американецсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре пĕрлешнĕ çĕршывсене пур майпа та пулăшу парса тăма яланах хатĕр тăнине аван палăртрĕ.

Юлашки даннăйсем тăрăх, съездра 2.500 делегат ытла пулнă. Вăл шутра — вырăссен, украинецсен, чехсен, словаксен, сербсен, хорватсен, словенсен, болгарсен, македонецсен представителĕсем пулнă, çавăн пекех тата съездра Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи ытти организацисен представителĕсем те пулнă.

Съездăн юлашки заседанийĕнче Рузвельт янă саламлă телеграммăна вуласа панă.

Çавăн пекех тата съезд тĕрлĕрен организацисенчен питех те нумай саламсем илнĕ.

Съезд Европăри славянсем патне чĕнсе çырнă çырăвăн текстне йышăннă.

Пирĕн съезд Америкăри 15 миллионлă славян халăхĕн съезчĕ. Эпир — вырăссен, украинецсен, чехсен, хорватсен, поляксен, Карпатри украинецсен, македонецсен, сербсен, словаксен, словенсен, черногорецсен, болгарсен ывăлĕсемпе хĕрĕсен делегачĕсем. Эпир, — тенĕ чĕнÿре, — гитлерла бандитсен йытхĕтĕвĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿри сирĕн çапăçусем çине çавтери кăмăллă пăхатпăр, сирĕн çĕнтерÿсем пире темĕн пекех хавхалантараççĕ. Америкăри славянсем миллионшарăн тăрса алла хĕçпăшал тытса, этемлĕхе çăлса хăварасшăн пыракан кĕрешĕве хутшăнма хатĕр.

Съезд ятарласа резолюци йышăннă. Çав резолюцире съезд Европăра иккĕмĕш фронт уçмалли çинчен каланă. Çавăн пекех тата съезд тепĕр резолюци йышăннă. Ку резолюцире съезд уйрăм çынсемпе ушкăнсем этемлĕх тăшманне хирĕç кĕрешме пĕрлешнĕ çĕршывсене Америкăри славянсем шанса тăнине вăйсăрлатма хăтланнине, Америкăри славянсене тĕрлĕ çулпа яма хăтланнине сивлет. Съезд çав резолюцире Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительствине «пиллĕкмĕш колоннăн» тата фашистла агрессорсене «çырлахтарма» тăрăшакан политикăлăн тăракансене пурин ĕçĕсене те хирĕç чи тивĕçлĕ хаяр мерăсем йышăнма чĕнет.

Хăй йышăннă решенисене пурнăçа кĕртме съезд яланлăхах национальнăй комитет суйласа хăварнă.

Съезд славян хĕрарăмсен организацине тунине ырланă.

Июнĕн 21-мĕш кунне съезд «славян нацийĕн вырсарникунĕ» тесе йышăннă. Çав кун пĕтĕм тĕнчери славянсен съезчĕн чĕнĕвне халăхсем хушшине анлăн сарма шкăн массăллă митингсем туса ирттереççĕ.

Съезд питĕ пысăк массăллă митинг пулнă хыççăн хупăннă, çав митинга 10 пин çын хутшăннă.

Англи авиацийĕ Киль, Гент тата Тронхейм çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, апрелĕн 29-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 29-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен соединенийĕсем йышлăн вĕçсе кайса Киль хулине тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе пысăк пушарсем тухнă. Ытти самолетсем Германин Тронхеймри тинĕс-çар базине атакăланă.

Çавăн пекех тата Голландири аэродромсемпе Гентри (Бельгире) электростанци çине те бомбăсем пăрахнă.

Чăваш халăхĕн ывăлĕ — пулеметчик Иван Смирнов

Сентябрьти хаяр çапăçусем вăхăтĕнче Ленинград фронтĕнчи Н-ски чаçа çамрăк лейтенант-пулеметчик Иван Смирнов пырса çитнĕ. Вăтам пÿллĕ çын, шÿт тума юрататакан-скер, вăл нихăçан та салхуллă çÿремен. Темĕнле йывăр сехетсенче те лейтенант хăйне çирĕппĕн тытнă. Хăйĕн боецĕсене лăпкă сасăпа приказсем панă, вĕсене чĕререн каланă сăмахсемпе паттăрлатнă. Унăн кăвак куçĕсем ахаль чухне йăвашшăн та ăшшăн пăхнă, анчах та çапăçу хĕрсе кайнă тапхăрта çак куçсенче хаяр вут-хĕм çиçсе çунни курăннă.

Сентябрь уйăхĕнче Смирнов суранланнă. Боецсем хăйсен командирне чĕререн шеллесе госпитале ăсатнă. Мĕншĕн тесен çак савăнăçлă та лăпкă тата яланах хавас кăмăллă çынна вĕсем пурте юратнă, ăна пур енчен те шаннă, унăн пултарулăхне хакланă.

Смирнов лейтенант санитари чаçĕнче нумай тăман. Унăн чунĕ-чĕри каллех фронта туртăннă, мĕншĕн тесен çак фронтра пирĕн çĕршывăн малашлăхне, Ленинград ирĕклĕхне, атте-аннесен пурнăçне, арăмсен, аппасен-йăмăксен тата юратнă хĕрсен чыслăхне хÿтĕлессишĕн хĕрÿллĕ çапăçусем пынă. Смирнов çав кунах строя тапрăннă.

Халиччен партире тăман большевик Смирнов часах партие кĕнĕ.

Фронтра хаяр çапăçусем пынă... Смирнов подразделенийĕнчи паттăр пулеметчиксем, сентябрьти пекех, хыттăн тăрса çапăçнă, фашистла ирсĕрсем çине тăхлан çăмăрĕ çутарнă. Ку вăхăтра 22 çулти командир хăйне çирĕппĕн тытнă. Вăл хăйĕн кашни решенинех лайăх шухăшласа пăхнă хыççăн тин, пулас ĕçрен мĕн тухма пултарасса тĕплĕн чухласа илнĕ хыççăн тин йышăнса пурнăçланă.

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче Смирнов иккĕмĕш хут аманнă. Малтанхи пекех, госпитале кайман. — Фронтрах сывалатăп, — тенĕ вăл юлташĕсене.

Темиçе кун иртнĕ. Смирнов фронта çĕнĕрен пырса çитнĕ. Пулеметчиксем ăна паттăрлăхшăн, хăюлăхшăн, ĕçе пĕлнĕшĕн, чăтăмлăхшăн тата лăпкă пулнăшăн юратнă. Смирнов çамрăк пулнă, анчах та ăна хăйĕнчен асли сем те хисепленĕ.

Пултарулăхне кура Смирнова старши лейтенант званине панă. Çакăн хыççăн вăл пушшех те пикенерех ĕçленĕ, боецсене умра тăракан татăклă çапăçусене тухма хатĕрленĕ.

Хĕрлĕ Çар фронтăн нумай участокĕсенче наступлени пуçласа янă. Смирнов подразделенинчи пулеметчиксем те хăвăртрах хĕрÿллĕ çапăçусене тухма васканă.

Боецсем кĕтсе тăнă кун çитрĕ. Вăл 1942 çулти февралĕн 8-мĕш кунĕ. Çак кунхине пирĕн фронт большевик Иван Васильевич Смирнов тунă чаплă ĕç çинчен калакан хыпара илтрĕ.

...Çапăçу ире хирĕç пуçланса кайрĕ. Артиллери кĕрлесе тăнă хушăра пехота наступлени пуçласа ячĕ. Пирĕн снарядсем тĕл кайса лекеççĕ, вĕсем тăшман позицине ÿксе унăн блиндажĕсене, пулемечĕсене, миномечĕсене сывлăшалла сирпĕнтереççĕ, нумай çул ÿссе ларнă чăрăшсене тÿнтере-тÿнтере яраççĕ.

Нимĕçсем пире хирĕç урнă пекех çапăçаççĕ. Вĕсен рубежĕ пĕтĕм тавралăха курăнакан çÿлĕ вырăнта тăрать. Çакăнтан вĕсем пирĕн чаçсем ăçта вырнаçнине сăнаса тăнă, çакăнтанах хăйсен артиллерине хăш тĕле пемелли çинчен кăтартусем парса тăнă. Çавăнпа та пирĕн чи малтан çак çÿлĕ тăвайккине йышăнса илмелле пулчĕ. Анчах та нимĕçсем ку тăвайккипе çавтери вăйлăн тĕреклетсе хунă, пирĕн наступлени тăвакан чаçсене пулеметсенчен, миномотсенчен хаяррăн персе тăраççĕ.

Пирĕн боецсем çакăнти çапăçура халиччен пулман паттăрлăх кăтартрĕç. Вĕсем утăм хыççăн утăм малалла пычĕç. Юлашкинчен тăшман войскисем çине кĕрсе кайса хире-хирĕç тытăçрĕç. Фашистсем тÿссе тăраймасăр каялла тарчĕç. Тăвайкки совет войскисен аллине куçрĕ.

Смирнов приказ илет: хамăр войскăсем çĕнĕрен йĕркеленсе çитиччен рубежа тăшман аллине памалла мар.

Старши лейтенант Смирнов рубежа тытса тăма пултарчĕ.

Нимĕçсем хăйсен тин çеç çухатнă рубежĕ вăрçă ĕçĕсемшĕн çавтери паха вырăнта тăнине тата çав çÿлĕ вырăнтан вырăссем вĕсене пысăк çухату кÿме пултарассине лайăх ăнланнă. Çавăнпа та вĕсем, рубежа каялла илес тесе, часах хаяр контратакăсем тума тытăнчĕç.

Фашистсем атака пуçласа ячĕç. Атакăра вĕсем пĕтĕм пĕвĕсемпе тăрсах утса пыраççĕ. «Психсем» пире хăратса çĕнтерме шутлаççĕ.

Чи хĕрÿллĕ самантра нимĕçсен мини Смирновпа унăн пулеметчикĕсем выртакан çĕрех ÿксе çурăлать. Пулеметăн пĕтĕм расчечĕ стройран тухать. «Максим» пулемет çумĕнче пĕр çын кăна, хăрама пĕлмен паттăр Иван Смирнов, сывăн тăрса юлать. Смирновăн чĕринче тарăху, тăшмана курайманни ÿссе кайса вĕреме тытăнать. Нимĕç фашисчĕсене унăн хăй юнĕшĕн, хăйĕн сывăх тусĕсен юнĕшĕн, асаплантарса вĕлернĕ хĕрарăмсемпе старике сен тата ачасен юнĕшĕн, ишсе тăкнă хуласемпе ялсемшĕн çавтери хыттăн тавăрас килет. Çак тарăхупа Смирнов, фашистсем хăй патнех çитсе пынă чух, гашетка çине хытăрах пуснă. Пулемет, майлă самантра сая ярас мар тенĕ пекех, хăвăртрах пеме пуçланă. Фашистсен салтакĕсем тĕл перекен Смирнова хирĕç текех тÿссе тăрайман—каялла тарма тытăннă. Çакна кура нимĕç офицерĕ урса кайнă. Вăл аллисемпе сулкаласа, таракан салтакĕсене чарма тăрăшнă. Анчах та салтакĕсем, офицерне тĕксе ÿкерсех, каялла ыткăннă.

Ĕçĕ ăнманни фашистсене хытă тарăхтарса янă. Вĕсем пĕтĕм тăвайккине минăсемпе персе шăтарса пĕтернĕ. Чылаях хавшанă «çар ушкăнĕ», офицерсем хăваланипе, татах наступление тухнă. Анчах ку атаки те Смирнов пулеметне çунтарнипе каллех путланса ларнă. Нимĕçсем çĕр çумне выртнă. Унтан хăйсем хыççăн тарăн йĕр хăварса, каялла шăвăннă. Ку тапхăрта командир вăтăра яхăн тăшманăн вилли выртса юлнине шутласа кăларнă.

Нимĕçсем чарăнман. Вĕсем Смирнова хирĕç йывăр танк кĕртсе янă. Танк хыççăн, юр кĕрчĕ тăрăх пута-пута ларса, фашистсен пехоти пынă. Çапла «Максим» пулеметпа пĕччен выртакан Смирнова хирĕç пĕр пысăк танк тата темиçе вунă салтак пынă. Кунта çĕнтерÿ тума кирлĕ майсем пурте тăшманенче пулнă. Хăйĕнчен темиçе хут вăйлă тăшмана хирĕç кĕрешни те ахалех пулассăн туйăннă.

Анчах тăван çĕршыв умĕнчи парăм ĕçне çитиччченех тытăнса тăма хушать. Смирнов чакма шутламан.

Смирнов аллинчи «Максим» хăвăрт ĕçлеме тытăннă, вăл черет хыççăн черет пульăсем ярса тăшман пехотине сăптарнă. Нимĕç салтакĕсенчен сывă юлнисем темиçе гитлеровец вăрманалла тарма тытăннă, анчах вĕсене те пулемет пульли çитсе çапса ÿкернĕ. Пĕччен юлнă танк каялла çаврăнса кайнă...

Ку вăхăтра пирĕн подразделени малалли вăрçă ĕçĕсене тума хатĕрленнĕ. Вăл хатĕрленсе тухиччен рубежа мĕнле те пулсан тытса тăмалла пулнă. Ку задачăна Смирнов коммунист лайăх пĕлсе тăнă.

Танк каллех контратакăна тухнă. Ун хыçĕнче — фашистсен пехоти. Ку хутра вăл хăйĕн маршрутне улăштарать. Хурçă тискер кайăк, гусеницисемпе чăнкăртаттарса, тÿрех Смирнов персе выртакан пулемет позицийĕ çинелле пынă. Анчах Смирнов та хăраса ÿкмен. Вăл пулемет гашеткине çирĕпреххĕн ярса тытнă, шăлĕсене хытăрах çыртнă. Пулемет лайăх майласа лартнă машина пекех ĕçленĕ, унăн тĕл лекекен пульлисем тăшмана пĕр шеллемесĕр çулнă. Пуля лекеймен фашистсем пуçĕсене пĕшкĕртсе танк хыççăн чупнă. Нимĕçсем хăйсен малтанхи атакисенче тăкăнса юлнă виллисем урлă чупса пынă.

Танк пулемета тулса, ун çине пеме тытăннă. Снаряд шартлатса çурăлнă. Пулемет сиксе илнĕ, вăйлă сывлăш хумĕ Смирнова аяккалла ывăтса янă. Анчах та вăл нумай выртман, çав самантрах тăн пырса кĕнине туйнă. Питех те шел, пулемет ĕçлеми пулнă! Шутласа тăма вăхăт пулман. Смирнов хăвăртрах автоматне илнĕ те нимĕç салтакĕсене тĕлле-тĕлле пенĕ. Танк сывхарнă. Смирнов çаплах пенĕ. Фашистсен речĕсем сайраланнă. Вĕсене большевик Иван Смирнов пере-пере ÿкернĕ. Анчах та танк ун патне хăвăрт шуса пынă...

Эпир пĕлместпĕр, мĕн шутланă-ши отечественнăй вăрçăн геройĕ — 22 çулти Иван Васильевич Смирнов — хăйĕн пурнăçĕн юлашки минутисенче?

Вăл, тен, Чăваш республикинчи пуян тырпул ÿстерекен тăван ялĕ — Çĕнĕ Сĕнтĕр ялĕ çинчен (Комсомольски район, — ред.), халĕ çав яла çакăнта, Çурçĕр енчи шурлăхсемпе кÿлĕсем хушшинче хăй кăкăрĕпе хÿтĕлени çинчен шутланă пулĕ. Е вăл Ленинград çинчен, унăн илемлĕ урамĕсемпе проспекчĕсем çинчен, ешĕл бульварĕсемпе савăнăçлă паркĕсем çинчен шухăшланă пулĕ. Ку пире паллă мар. Анчах та пĕр çакăн çинчен кăна ĕнентерсех калама пулать: Смирнов коммунист хамăрăн çĕтерÿшĕн, хамăр халăхăн ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн хăйĕн пурнăçне пĕлсе панă, мĕншĕн тесен вăл хăй те халăхăн тĕрĕс ывăлĕ пулнă.

Иван Смирнов танк гусеницисем айĕнче вилнĕ... Анчах та унăн паттăр ĕçĕсемпе чаплă ячĕ нихăçан та вилес çук, мĕншĕн тесен паттăр та чаплă ĕçсем вилĕмрен те вăйлăрах пулаççĕ.

Аслă отечественнăй вăрçă чарăнĕ. Артиллери сасси лăпланĕ. Юратнă çĕршыв хăйĕн суранĕсене тÿрлетĕ. Тăван çĕршывра çĕнĕ хуласем ÿссе ларĕç. Ун чухне хальхи ылханлă фашизм кунĕ асапсемпе хуйхă-суйхăсене те манса пырĕç. Анчах çав вăхăтра та совет халăхĕ хăйĕн хăватлă ывăлĕ — большевик Иван Васильевич Смирнов тунă чаплă ĕçсене манмĕ. Иван Смирнов ятне совет халăхĕ асран ярас çук. Унăн ячĕ аслă халăхăн чаплă историйĕн страницисенче ĕмĕрлĕх çиçсе тăрĕ.

Политрук И. КУРЧАВОВ.

Действующи арми.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 758. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 266. Ф. 6. 58 64 п: м: